чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

36/26442/№ Юн кун, 2014, нарăс (февраль), 26 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

*Канашлу*

## Прокуратура ирĕк парсан кăна

***Республикăри тĕрĕслевпе сăнав органĕсем пĕр вăхăт ĕç тăвакан влаç органĕсене, ку тытăмра тăрăшакансен шухăшĕпе – сăлтавпа та, сăлтавсăр та – кусран вĕçертменни çинчен шав пулчĕ. Чăваш Енре ку çивĕч ыйтăва федерацин Атăлçи округĕнче чи малтан çĕклерĕç.***

2012 çулхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче иртнĕ ларура республикăри муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ĕç тăвакан Канашĕ Чăваш Республикин прокуратурипе, РФ МЧСĕн Чăваш Енри управленийĕпе, Россельхознадзорпа тата Ростехнадзорпа – сăнаса тата тĕрĕслесе тăракан 9 органпа – пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлесси пирки килĕшĕве çирĕплетнĕ. Халĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи ведомствăсен хушшинчи комисси вăл мĕнле пурнăçланнине çирĕп тĕрĕслесе тăрать. Федерацин Чăваш Енри тĕп инспекторĕ ертсе пыракан координаци канашĕсенче ăна тăтăш сӳтсе яваççĕ. Ĕнерхи ларура – ăна Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пычĕ – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пĕлтĕрхи ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетрĕç, икĕ енлĕ килĕшӳ ĕç тăвакан влаç тытăмĕсемпе тĕрĕслесе тăракан органсен хушшинчи çыхăнăва лайăхлатнине çирĕплетрĕç. Халĕ тĕпре – должноçри çынна явап тыттарасси мар, ытларах – профилактика ирттересси. Планланă тата планламан тĕрĕслевсен шучĕ палăрмаллах чакнă. Тĕслĕхрен, 2012 çулта яваплă ертӳçĕсене 443 хут е 2 млн та 828 пин тенкĕлĕх штрафланă тăк, пĕлтĕр – 279 хут, 1 млн та 669 пин тенкĕлĕх.

ЧР муниципалитет йĕркеленĕвĕсен Канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев пĕлтернĕ тăрăх – «... хутшăнусем палăрмаллах лайăхланни вырăнти влаç тытăмĕсен ĕçĕн усăлăхĕнче те палăрчĕ». Çапах та хăшпĕр сăлтав ура хурать. «Тĕрĕслекен-сăнакан орган, сăмахран, ял тăрăхĕн бюджечĕ чухăн пулнине шута илме тăрăшмасть тата йăнăша тӳрлетме питĕ сахал вăхăт уйăрать иккен. Çĕмĕрле хула администрацине, акă, районсен хушшинчи прокуратурăран çĕр лаптăкне аукцион урлă тара парассин докуменчĕсене ыйтса çырнă хут пĕлтĕрхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче çитнĕ, пурнăçламалли вăхăта «юпан 10-мĕшĕ» тесе палăртнă. Мичурин урамĕнчи çурт пирки информацие вара питĕ кĕске вăхăтра хатĕрлеме хушнă.

Шупашкар районĕнчи 11 ял тăрăхĕн пуçлăхĕсене УФАС харăсах явап тыттарнă. Çакăн пек тӳрех йышлăн штрафлани те ертӳçĕсен ĕçлес туртăмне сӳрĕклетет. Пуçлăхсене хăйсенчен килмен сăлтавсăр айăплани текех ан пултăр тесе РФ Патшалăх Думи «Раççей Федерацийĕн вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» 131-мĕш саккуна 2013 çулхи раштавăн 21-мĕшĕнче улшăнусемпе хушăмсем кĕртнĕ. Çак саккун кăçалхи кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен вăя кĕнĕ. Халĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене прокуратурăпа калаçса килĕшмесĕр тĕрĕслеме никамăн та ирĕк çук. Çакă хăйĕн вăхăчĕчченех çимĕç панă: 2013 çулхи пĕрремĕш кварталта яваплă тӳре-шарана 853558 тенкĕлĕх штрафланă тăк, тăваттăмĕш квартал кăтартăвĕ – 255361 тенкĕ кăна. Çав вăхăтра федерацин суд приставĕсен службинчен пĕлтернĕ тăрăх – вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕлĕшпе суд органĕсенче 300 ытла ĕç выртать. Сумми те пĕчĕк мар – 325 млн тенкĕ.

Станислав Николаев çивĕч ыйту татах çĕклерĕ. «Вĕсене пĕрле калаçса, канашласа татса парасчĕ, – сĕнчĕ вăл, – ун чухне эпир хамăр ĕçри çитменлĕхсемпе кăлтăксенчен хăвăрт хăпса пырăпăр»...

Федерацин суд приставĕсен службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçин Анатолий Ивановăн тата Чăваш Республикин прокурорĕн Владимир Метелинăн, РФ Пенси фончĕн республикăри управленийĕн ертӳçин Роза Кондратьеван сăмахĕнче нумай ырă сĕнӳ пулчĕ. Юлашкинчен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлне тишкерекен ведомствăсен хушшинчи комисси тĕрĕслекен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен хушшинче сиксе тухакан çивĕч ыйтусене татса пама ятарлă ушкăн йĕркелеме йышăнчĕ, çитес çулхи ĕç планне çирĕплетрĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

# Хула аталанăвне кашнин тӳпе хывмалла



***Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тунти кун Çĕмĕрле хулинче пулчĕ. Малтанах муниципалитетăн 8-мĕш гимнази ĕç-хĕлĕпе паллашрĕ. Кунта 625 ача вĕренет. Информацин хăватлă тытăмне йĕркеленĕ. Вĕренӳ ĕçĕнче вицĕ компьютер класĕпе, конференц-залпа, автоматизациленĕ NetSchool тытăмпа усă кураççĕ.***

Михаил Игнатьев тĕпрен çĕнетнĕ апатланмăша кĕрсе курчĕ. Технологин çĕнĕ оборудованийĕпе шкул апатланăвĕн терминалне еплерех ĕçе кĕртнипе кăсăкланчĕ. Вĕренӳ пӳлĕмĕсене, спорт залне, конференц-зала тишкерчĕ. Педагогсемпе, гимназистсемпе курнăçрĕ, вĕренӳ-воспитани ĕçĕпе паллашрĕ. Гимназире инновацие тĕпе хуракан учительсем вăй хуни никама та иккĕлентермерĕ. Вĕсем кунта ачасене тарăннăн шухăшлама, тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума хăнăхтараççĕ. Пуçламăш класранах теори пĕлĕвне практикăпа çыхăнтарма вĕрентеççĕ. Гимназистсем республика тата Раççей шайĕнче иртекен конкурс-олимпиадăра çĕнтереççĕ. Вĕренекенсем Михаил Игнатьева Культура çулталăкне мĕнлерех усçи çинчен каласа кăтартрĕç.

Республика пуçлăхĕ ăнăçлă аталанакан «Автофургонсен комбиначĕ» обществăна çитсе курчĕ, автомашина фургонĕ туса кăларакан цехсенче пулчĕ. Предприятин энергие перекетлеме май паракан пысăк блоклă котельнăй ĕç-хĕлĕпе паллашрĕ. Хальхи вăхăтра АУО 200 ытла тĕрлĕ фургонлă автомашина ăсатать. Вĕсемпе çарта ытти çĕрте анлăн усă кураççĕ.

Предприятире 966 çын вăй хурать, ĕç укçи вăтамран 24 пин тенкĕпе танлашать. М.Игнатьев комбинат коллективне ăнăçу суннă май çапла каларĕ: «Сирĕн производство культури ӳссе пырать, çитĕнӳсем курăмлă, ĕç калăпăшĕ пысăк, малашлăх пур».

«Восход» культура керменĕнче хула активĕпе тĕл пулчĕ. Çĕмĕрле хастарĕсене наградăсем пачĕ. Республика Пуçлăхĕн Тав сăмахĕпе алла çыхмалли сехете автофургонсен комбиначĕн фрезеровщикĕ Александр Крылов, Çĕмĕрлери ятарлă автомобильсен завочĕн слесарĕ Василий Чураков, территорисен хушшинчи медицина центрĕн врачĕ Сергей Демьянов, ачасен 1-мĕш ӳнер шкулĕн директорĕ Светлана Мокшонкова тивĕçрĕç.

Михаил Васильевич хула япăх мар аталаннине палăртрĕ, анчах ура хуракан самантсем те пуррине аса илтерчĕ. Хула администрацийĕ пĕр тапхăр республика влаçĕн шанăçне тӳрре кăлараймарĕ, хăйĕн умĕнчи тĕллевсене туллин пурнăçлаймарĕ терĕ. Социаллă ыйтусене вырăнта татса паманнипе республика шайĕнче пăхса тухнине пĕлтерчĕ. Сăмахран, энергипе тивĕçтерекен организацисен умĕнче пухăннă пысăк парăма тата котельнăйсене модернизацилеме уйăрнă 120 миллион тенкĕпе тĕллевлĕн усă курайман.

Хулара кадр ыйтăвĕ çивĕч. Заводсене рабочисем çитмеççĕ. Кăткăс ыйтусенчен пĕри – пурăнмалли çурт-йĕр хуçалăхĕ, ăна тытса тăрасси тата пурăнмалли çуртсене ăшăпа тивĕçтересси.

Хула администрацийĕн пуçлăхĕ Любовь Дмитриева экономикăпа социаллă аталанăвăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе тата 2014 çулхи тĕллевсемпе паллаштарчĕ. Вăл каланă тăрăх – хула экономики иртнĕ çул лайăх аталаннă, промышленноç производствин калăпăшĕ ӳснĕ, тавар çаврăнăшĕпе халăха кӳрекен пулăшу, вăтам ĕç укçи, бюджетсене налук хывасси пысăкланнă. Анчах хула хуçалăхĕнчи лару-тăру çăмăл пулман. Малашне инвестици хывассипе тĕллевлĕн ĕçлемеллине, ĕç рынокĕнчи çивĕч лару-тăрăва чакармаллине, вăтам тата пĕчĕк предпринимательлĕхе ататалантармаллине палăртрĕ. Тĕп вырăнта çамрăк та пуçаруллă специалистсем пулмалла терĕ.

Ыйтусене сӳтсе явма ЧР экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, строительство министрĕ Олег Марков, конкуренципе тарифсен политикин патшалăх службин ертӳçи Альбина Егорова, патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр хуçалăхĕн тĕп инспекторĕ Олег Бирюков тата ыттисем хутшăнчĕç.

Михаил Васильевич Çĕмĕрлесене пĕр ушкăна пĕрлешсе ĕçлеме, хула аталанăвне кашнинех тӳпе хывма, бюджет укçипе тухăçлă усă курма, ăнăçлă аталанмалли çул-йĕр суйласа илме сĕнчĕ.

■ **Юлия МАРЕЕВА**

**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**



# ВĂХĂТ ТУСАНĔ ХУПЛАСРАН СЫХЛАÇÇĔ

**Мăн асаттесемпе асаннесем çĕр-çĕр çул хушшинче вун-вун тĕрлĕ йăла-йĕрке, уяв туса ирттерме вĕреннĕ, ламран лама куçарса пынă. Ача çуралнине хăй йĕркипе паллă тунă, туй кĕрлеттернĕ, салтак ăсатнă, çулталăкри тĕрлĕ праçнике уявланă тата ытти те... Паян вара эпир, XXI ĕмĕрте пурăнакансем, /питĕм хĕрелет/ хамăрăн йăх тымарĕсене пĕлместпĕр, халăхăн ырă йăли-йĕркине манăçа кăларса пыратпăр. Социологсем ирттерекен ыйтăмсем çирĕплетнĕ тăрăх – юлашки çулсенче Тăван çĕр-шыв туйăмĕ мăкалнă, унăн историйĕпе культурине хисеплесси чакнă.**

**Иртнисĕр хальхи пурнăç пулмасть теççĕ. Паянхисĕр вара малашлăхăн çути çук. Тĕрĕсрех – иртнипе хальхин килĕшӳллĕ шайлашăвĕ пуласлăх никĕсне хывать. Аваллăх документсенче, ăслă ӳсĕмрисен аса илĕвĕсенче, илемлĕ литературăра, ӳнер произведенийĕсенче... упранать. Паян пурăнакансем тĕнче, çĕр-шыв пурнăçне витĕм кӳнĕ пулăмсене, паллă йĕр хăварнă çынсен кун-çулне хуплакан вăхăт тусанне сирсе пăхни, вĕсен паллă ĕçĕсемпе йăнăшĕсене тишкерни – малашлăх ырлăхĕшĕн.**

**«Ачасем – этемлĕх пуласлăхĕ», «çамрăк ăру – малашлăх элемĕ»... Çакăн йышши каларăшсене час-часах илтме пулать. Аплă тăк çамрăк – аваллăхпа пуласлăха çыхăнтаракан чи шанчăклă тĕвĕ. Çавăнпах унăн тăван халăх историне, кун-çулне, культурине тарăн тĕпчесе пĕлме, ăса хывма, малашлăх чикки урлă каçарма хатĕр пулмалла. Пурăннă чухне паттăрлăх кăтартнă, çĕр-шыв, республика, район-хула аталанăвне пысăк тӳпе хывнă ентешĕмĕрсен кун-çулĕпе хавхаланса ырă ĕç тума тăрăшмалла. Çак шăхăша ача чунне пĕчĕкрен вырнаçтарсан аванччĕ.**

**Телее – ача-пăчана аваллăхпа кăсăклантарса яма пĕлекенсем пур-ха пирĕн хушăра. Ку енĕпе мана Çĕрпӳ районĕнчи Ямаш ялĕн шкулĕнчи опыт уйрăмах килĕшрĕ. Кунта 2004 çулта историпе тавра пĕлӳ музейне уçнă. Ăна йĕркелесе ертсе пыраканĕ – чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ Ираида Филимонова. «Урокра сăмахпа каланипе çеç ăнлантарма йывăр. Акă, сăмахран, мĕн-ха вăл ачашăн сурпан, масмак, такан? Япала ал айĕнче пулсан хама та, вĕренекенсене те çăмăлрах-çке. Ĕлĕкхи япаласене шырама ял тăрăх тухса кайрăмăр», – музей йĕркелес шухăш епле çурални пирки çапларах каласа панăччĕ вăл.**

**«Экспедици» ачасене çунатлантарсах янă. Вĕсем килтен, тăванĕсенчен, кӳршĕ-аршăран хуçалăхра усă курма пăрахнă ĕлĕкхи япаласене нумай тупса килнĕ. Халĕ музейра мăн асаттеасанне вăхăтĕнчи хресчен кил-çуртне çăмăллăнах куç умне кăларса тăратма пулать. Ухват, чукун, турчăка, чĕрес, сăпка, тĕрĕллĕ ал шăллисем... Тахçанах манăçа тухнăскерсем ачасене аваллăхпа паллаштараççĕ.**

**Унтан И.Филимонова хăйĕн вĕренекенĕсене тăван ен, тăван ял историйĕпе кăсăклантарса янă. Ачасем Ямаш, Чăрăш, Тукаль ялĕсен кун-çулне тĕпчесе пĕлнĕ. Ку тăрăхра паллă çын нумай çуралса ӳснĕ. Тухтăрсем, артистсем, учительсем, агрономсем, юрăççем... Ачасем вĕсен кун-çулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, пултарулăхĕпе çыхăннă тĕпчев ĕçĕсем хатĕрлеççĕ. Шыраса кĕрсе каяççĕ те... Пĕлнĕ тесе шутлакан япаласен хушшинче кĕтменлĕх сике-сике тухать. Акă, сăмахран, тĕпчеме палăртнă çын хăйсен виççĕмĕш е тăваттăмĕш сыпăкри тăванĕх пулса каять. Çакă ачасен кăсăкланăвне татах вăйлатать.**

**Несĕл историне пĕлменни – паянхи пысăк инкек. Ĕлĕк çичĕ сыпăк таран асра тытнă. Хальхи вăхăтра чылай чухне чи çывăх çынсемпе те хутшăнмастпăр. Хамăр тĕнчере хамăрăн савăнăçпа, нуша-инкекпе пурăнатпăр. Ачасене йăх-несĕл тымарĕ ăçтан пуçланни, унăн тăсăмĕсем пирки темшĕн каласа кăтартмастпăр. Тен, хамăр та пĕлместпĕр. Пире те каламан, пĕлтермен. Çакă пулса тăмасть-и-ха аваллăхпа малашлăх сыпăкне татакан сăлтав?**

**«Пĕррехинче хамăр шкултан вĕренсе тухнисем хăш тăрăхра, ăçта салтакра пулнине пĕлме тĕллев лартрăмăр, – тенĕччĕ И.Филимонова. – Пĕр сăн ӳкерчĕкрен пуçларăм. Унта сăнарланнă каччă пирки каласа патăм. «Кашни арçын ачан Тăван çĕршыва хӳтĕлемелле. Çавăн чухне çеç эпир лăпкă çывăрма пултаратпăр», – тесе сăмахăма вĕçлерĕм».**

**Ачасем «ăçта службăра пулнă?» тесе ыйтман çын та хăварман, ахăртнех, ялта. Сăн ӳкерчĕксем темĕн хулăнăш альбом тумалăх пухăннă. Ку тăрăхри каччăсем Афганистанра питĕ нумайăн пулнă иккен. Вĕсен орден-медалĕсене, кĕнекисене, ытти япалине шкула илсе пынă, музейре вырăн тупса панă. Афганецсем пирки уйрăм стенд та хатĕрленĕ. Ачасен ĕçĕ Шупашкартан килнĕ çар комиссарне те тĕлĕнтернĕ. Иккĕленӳ çук – кунашкал ĕç-хĕл çитĕнекен ăрăва патриот воспитанийĕ пама, çĕр-шыв хӳтĕлевçи туса ӳстерме пулăшать.**

**И.Филимоновăпа калаçнă хыççăн «шкулта музей кирлех» тесе çирĕплетрĕм. Музей – аваллăх управçи, иртнипе малашлăха çыхăнтараканни. Вăл ачасен тавра курăмне анлăлатма, çамрăк ăрăва тăван ен, çĕр-шыв историйĕпе кăсăклантарма, тăван халăх культурине, йăли-йĕркине асра тытма, аваллăха тĕпчес туртăма вăйлатма пулăшать.**

**Телее, халĕ тĕслĕх вырăнне илнĕ Ямаш шкулĕ республикăра пĕрре çеç мар. Кашни пĕлӳ çуртĕнче тенĕ пекех музей мар пулсан та, аваллăхпа çыхăннă кĕтес пурах. Пĕрисем ăна тавра пĕлӳ ыйтăвĕсемпе çыхăнтарнă, теприсем – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин синкер кунĕсене, виççĕмĕшсем мухтава тивĕç ентешĕмĕрсене халалланă. Анчах вĕсем пурте пĕрешкел тивĕçе пурнăçлаççĕ – этемлĕхшĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмсене вăхăт тусанĕ хупласран упраççĕ.**

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

**КУН хыççăн КУН** ☎ 56-04-26

## Тăвай енре – ЧНК уйрăмĕ

***Тăвай районĕнче Чăваш наци конгресĕн вырăнти уйрăмне йĕркеленĕ. Унăн канашне 15 çынран суйланă.***

Йыша шкулсенчи чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем, библиотекарьсем, халăх музейĕн директорĕ, чăвашлăха упраса хăварассишĕн чунран тăрăшакан шур сухалсем кĕнĕ. Канаш тилхепине тытса пыма Тăвай район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне – АПК аталанăвĕпе экологи пайĕн ертӳçине Валерий Чайкина шаннă.

Йĕркелӳ пухăвне Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ Алексей Леонтьев, ЧНК Мăн Канаш президиумĕн членĕ Эдуард Бахмисов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Ванерке, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăннă. Ĕçлĕ калаçура умра тăракан тĕрлĕ ыйтăва хускатнă.

**В.ВАСИЛЬЕВ.**

## Мускавран – çитĕнӳпе

***Çĕр-шывăн тĕп хулинчи ЦСКА манежĕнче çăмăл атлетика енĕпе Раççей чемпионачĕ иртнĕ. Ăмăртура 1000 яхăн спортсмен тупăшнă.***

Чăваш Ен атлечĕсем унтан тăватă медальпе таврăннă. Чемпионатра уйрăмах Альбина Чинчикеевăна ăннă: вăл 1500 метрлă дистанцире Новосибирск облаçĕн спортсменкине кая хăварса "ылтăн" çĕнсе илнĕ. Лондонри Олимпиадăна хутшăннă Елена Наговицына 5000 метрлă дистанцие 15,33 минутра вĕçлесе "кĕмĕлпе" пуянланнă. Çамрăксен ушкăнĕнче Ксения Левина пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Çӳллĕшне сикессипе Екатерина Федотова "бронзăна" тивĕçнĕ, унăн кăтартăвĕ – 1,86 метр. Ăмăртура мала тухнисем пуш уйăхĕнче Польшăри Сопот хулинче иртекен тĕнче чемпионатне хутшăнĕç.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Сывă пурнăç йĕркишĕн

***Сочире иртнĕ XXII хĕллехи Олимп вăййисене халалласа Вăрнар районĕнчи Кайри Тукай ялĕнче ăмăртусем иртрĕç.***



Уява халăх йышлăн пухăнчĕ. Йĕркелӳçĕсем ял халăхне саламларĕç, хамăр çĕр-шыври спортсменсенчен тĕслĕх илмеллине палăртрĕç. Ăмăртусен чи хĕрӳллĕ саманчĕ – биатлонистсен çивĕч тупăшăвĕ. Командăсем винтовкăран тĕл пересСипе тата йĕлтĕрпе ăмăртассипе вăй виçрĕç. Çăмăл мар кĕрешӳре Çĕрпелти вăтам шкулта вĕренекен Оля Васильева, Павел Васильев, Андрей Максимов, Денис Мышкин, Настя Николаева çĕнтерчĕç. Турнирта тĕрлĕ çĕрте вăй хуракансем те палăрчĕç. Юлашкинчен спортсменсем чупассипе ăмăртрĕç. Икĕ километрлă дистанцире Вăрнар ял хуçалăх техникумĕнче вĕренекен, спорт вăййисене хастар хутшăнакан Николай Иванова никам та çитеймерĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Дмитрий Мироновпа Павел Васильев йышăнчĕç. Маттуррисемпе хастаррисене тав хучĕсемпе чысларĕç, чи çамрăк тата чи аслă спортсменсене те парнесемпе хавхалантарчĕç.

**Н.ВАСИЛЬЕВ.**

## Фестивальте – тăван чĕлхене вĕрентекенсем

***Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçри Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ шкулта "Чăваш чĕлхипе литературин, тăван ен культурин урокĕсем хальхи шкулта" районти методика фестивальне ирттернĕ.***

Ăна ăста вĕрентекенсен опычĕпе паллаштарас тĕллевпе йĕркеленĕ. Унта Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи чăваш чĕлхипе тата литературипе пĕлӳ паракан 32 вĕрентекен хутшăннă.

Вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе уçă уроксенче, класс тулашĕнчи мероприятисенче паллаштарнă. Çĕнтерӳçĕсене тĕрлĕ номинацире палăртнă. Аслă Арапуç шкулĕнчи Елена Сорокина – "Тăван чĕлхене юратнăшăн", Патăрьелти 1-мĕш пĕлӳ çуртĕнчи Елена Бабаева – "Педагогика ăсталăхĕ", Турханти Валентина Сорокина "Педагогика культурин маçтăрĕ" номинацисенче мала тухнă. Маттуррисем Патăрьел район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн Хисеп хучĕсене, асăнмалăх парнесене тивĕçнĕ. Районти Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен ассоциацийĕ Аслă Арапуç шкулĕн педагогĕсене фестивале çӳллĕ шайра йĕркелесе ирттерме пулăшнăшăн тав тăвать.

**А.ГРОМОВА.**

**Çанталăк çинчен**

Паян хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3, каçхине 10 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 768 мм, сывлăшри нӳрĕк 76 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 27 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5, каçхине 15 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 766 мм, сывлăшри нӳрĕк 72 процент.

**Кун тăршшĕ 10 сехет те 32 минут.**

Пирĕн ентешсем

# Аделина Сотникова – Чăваш Енĕн ылтăн хĕрĕ

***Унăн ятне халĕ Раççей кăна мар, пĕтĕм тĕнче пĕлет. Вăл – пăр çинче эрешлесе ярăнакан хĕрсенчен чи пултарулли те чи сумли. Пике Чăваш Енре пурăнакансемшĕн те çывăх: 17 çултах Олимп тӳпине çĕкленнĕ спортсменка – Совет Союзĕн Геройĕн Александр Кочетовăн /1919-1994/ мăнукĕн хĕрĕ.***



### Александр Кочетов – вăрçă паттăрĕ

Александр Кочетов Улатăрта çуралса ӳснĕ, унăн ашшĕпе амăшĕ ĕмĕрĕпех заводра ĕçленĕ. Ывăлĕ çумне те пĕчĕклех «куршанак çыпăçнă». ФЗУ шкулĕнче пĕлӳ илнĕ хыççăн 17-ри яш Улатăр станцийĕн деповĕнче машинист пулăшуçинче вăй хунă, çав вăхăтрах хулари аэроклубра вĕреннĕ. 1938-1940 çулсенче – Энгельсри вĕçев училищин курсанчĕ, унтан Киеври çар округĕнче службăра тăнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан фронта кайнă. Летчик-истребитель, звено тата авиаци эскадрилйин командирĕ пулнă. Тӳпене 488 хут хăпарнă, тăшманăн 34 самолетне сирпĕтнĕ. Кăнтăр-хĕвел анăç фронтĕнче çапăçнă. Мускава, Сталинграда, Севастопольле хӳтĕлеме хутшăннă.

"1944 çулта Крыма фашистсенчен хăтарнă хыççăн 25-ри летчик тăван тăрăха килсе кайнă. Пĕтĕм халăх ăна ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ, çавăн чухнех вăл депона /хăйĕн пĕрремĕш ĕç вырăнне/ кĕрсе курнă. Вăрçă паттăрне курса хавхаланнă çынсем самолет туянма укçа-тенкĕ пухма тытăннă. Хула халăхĕ пуçтарнă укçапа каярах 12 самолет вĕçеве тухнă", – аса илет иртнине Улатăр хула администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă Антонина Чепаксина.

Фронтра паттăрлăх кăтартнăшăн Александр Кочетова сумлă чылай наградăпа чысланă. "Герой ятне ăна 1944 çулхи ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче панă, – пĕлтерчĕ истори наукисен докторĕ Иван Бойко. – Вăл – Ленин, Хĕрлĕ Ялав /икĕ хут/, I степень Тăван çĕр-шыв вăрçин /3 хут/ орденĕсен тата вун-вун медаль кавалерĕ. Унăн ячĕпе Шупашкарта тата Улатăрта урамсем хисепленеççĕ. Кадетсен шкулĕ те унăн сумĕпе мухтанать. Совет Союзĕн Геройĕн ятне ЧАССР Паттăрлăх тата Ĕç Мухтавĕн хисеплĕ кĕнекине кĕртнĕ".

Вăрçă хыççăн саппасри майор Улатăра таврăннă. Чылай çул хулари пăравус машинисчĕсен шкулĕн пуçлăхĕн çумĕнче, ДОСААФăн районти аэроклубĕнче звено командирĕнче ĕçленĕ. Шупашкара куçса килсен вăл малтан радиотехника шкулне ертсе пынă, каярах – стрелоксен спорт клубĕн пуçлăхĕ.



• *Александр Кочетков мăшăрĕпе.*

### Мăн кукашшĕ пекех хăюллă

Александр Кочетов вăрçă паттăрĕ пулнă, унăн мăнукĕн хĕрĕ Аделина Сотникова спорт аренинче хастарлăхпа тата ăсталăхпа тĕлĕнтерсе Олимп чемпионки ятне тивĕçрĕ. Ку таранччен пирĕн çĕр-шыври хĕрарăм фигуристсенчен /пĕччен ярăнассинче/ никам та ылтăн медаль çĕнсе илмен. Çапларах вăл – паянхи паттăр.

Çамрăк спортсменка мăн кукашшĕне нихăçан та курман, хĕр çывăх çынни вилсен /1994/ тепĕр икĕ çултан çуралнă. Аделинăн амăшĕ Ольга спортсменка пулнă: акробатикăпа туслашнă, анчах йывăр суранланнă. Чемпионкăн ашшĕ Дмитрий, сывă пурнăç йĕркине тытса пыраканскер, нумай çул ШĔМ тытăмĕнче ĕçленĕ. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест теççĕ. Хĕр ача 4 çулта чухне пĕрремĕш хут коньки çине тăнă, "Кăнтăр" пăр катокĕнче /Мускавра/ пирвайхи утăмĕсене тунă. Тепĕр виçĕ çултан вăл ЦСКАна куçнă, унтах ăна Раççей тата Европа чемпионки, пултаруллă тренер Елена Буянова /Водорезова/ асăрханă, хăйĕн хӳттине илнĕ /2004/.

2008-2009 çулсенче Аделина Сотникова Раççей ăмăртăвĕнче тата çĕр-шыв чемпионатĕнче çĕнтернĕ. Каярах юниорсен тĕнче чемпионатĕнче гран-прие виçĕ хут тивĕçнĕ. Вăлах – Европа чемпионачĕн кĕмĕл призерĕ /2013, 2014/, Раççейĕн виçĕ хут чемпионки, 2012 çулта çамрăксен Олимпиадинче кĕмĕл çĕнсе илнĕ. Кăçал медальсен пухмачĕ чи сумлă наградăпа пуянланчĕ – Олимп ваййисен "ылтăнĕ". Пысăк çитĕнӳпе палăрнă спортсменкăна РФ Президенчĕ В.Путин Туслăх орденĕпе чысларĕ. Халĕ вăл – РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ.

Фигуристсен хушшинче хĕре вундеркинд теççĕ, мĕншĕн тесен вăл 13-рех чи кăткăс каскадсем тума тытăннă. Паянхи кун Олимп чемпионки Пĕтĕм тĕнчери конькипе ярăнакансен союзĕн рейтингĕнче 6-мĕш вырăнта.

"Ку çитĕнӳ патне Аделина чылай çул талпăнчĕ. Çавăнпа çăмăлах пулмарĕ ăна. Командăсен ăмăртăвне ăна хутшăнтармарĕç, мăнукăм пăшăрханчĕ пулин те пуç усмарĕ. Пĕр енчен лайăх та – кашни кун спортзала çӳрерĕ, тренировка хыççăн тренировка. Эпир, сывăх çыннисем, ăна хавхалантартăмăр, хăвăншăн ярăн терĕмĕр. Телее, ăна ăнчĕ", – пĕлтернĕ пирĕн ентешĕмĕр, Сергиев-Посадра пурăнакан кукамăшĕ Ангелина Кочетова /Совет Союзĕн Геройĕн Александр Кочетовăн хĕрĕ/.

"Аделина мăн кукашшĕ пекех хăюллă та маттур, нимĕнле йывăлăхран та хăрамасть. Ача чухне те ачаш пулман, ашшĕ-амăшне итленĕ. Чăннипе, унăн вĕсен çумĕнче ларма та вăхăт çукчĕ: кашни кун каток çине васканă. Пăр çинче эрешлесе ярăнасси уншăн – пĕтĕм пурнăç", – тенĕ Ангелина Александровна. Çавăн пекех вăл Чăваш Ене мăнукĕпе килсе курасси пирки те пĕлтернĕ: "Улатăрта икĕ çул пулман. Аделинăна пĕчĕккĕ чухне илсе килеттĕмĕр, ăмăртусене çӳреме тытăнсан унăн вăхăт сахалланчĕ, халĕ хам та сайра хутра куратăп".

Улатăрта Александр Кочетовăн çывăх çыннисене хаваспах кĕтеççĕ. Унта вĕсен тăванĕсем пур: Анатолипе Любовь Федотовсем. Вĕсем тĕнчипе паллă тăванĕпе мухтанаççĕ, ăна ырлăх-сывлăх, ăнăçу сунаççĕ. "Аделина çав тери маттур. Пире пысăк çитĕнӳпе савăнтарчĕ. Вăл Олимп ваййисен арени çине тухиччен хумханнипе ыйхă килмерĕ, уншăн турра кĕл турăмăр. Пирĕншĕн вăл Александр Васильевич пекех чăн-чăн паттăр", – хавхаланса калаçрĕ Анатолий Николаевич.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

# Турист çулĕ такăрлантăр

***Чăваш Енре туризма аталантарас енĕпе йĕркеленĕ Координаци канашĕн анлă ларăвне икĕ министерство – ЧР Культура тата Физкультурăпа спорт – ĕçченĕсем хутшăнчĕç. 2013 çулхи раштав уйăхĕччен яваплă çак тивĕçе физкультурăпа спорт министерстви пурнăçласа пыратчĕ. Пĕлтĕрхи раштавăн 21-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ кăларнă "Чăваш Республикинче патшалăх управленине лайăхлатассипе çыхăннă мерăсем çинчен" указпа килĕшӳллĕн туризм ыйтăвĕпе малалла ЧР Культура министерстви ĕçлеме пуçларĕ.***



Канаш ларăвĕнче иртнĕ çул асăннă ыйтупа мĕнле ĕçленине пĕтĕмлетрĕç. Ун пирки физкультурăпа спорт министрĕн пĕрремĕш çумĕ Алексей Яковлев доклад турĕ. Алексей Николаевич палăртнă тăрăх – Координаци канашĕ ума лартнă тĕллевсене пурнăçланă. Мĕнле ĕçсем пирки сăмах пырать-ха? Тĕп мероприятисен шутĕнче – республикăри турорганизацисем Мускавра йĕркеленĕ Пĕтĕм тĕнчери "Интурмаркет – 13" курава, Чул хулари "Атăлçие уç" фестиваль-презентацие, Пĕтĕм тĕнчери "Аслă Атăл" автокаравана хутшăнни. Автокараван континентсен хушшинчи "Чейĕн аслă çулĕ" турист маршручĕпе çула тухнă.

Республикăра хальхи вăхăтра 130 ытла турфирма /2013 çулта – 125/. Вĕсем иртнĕ çул 134 пине яхăн çын ыйтăвне тивĕçтернĕ /9 пине яхăн ытларах/. Чикĕ леш енне 34 пин çын кайса килнĕ /4 пин ытларах/. Турист организацийĕсем паянхи кун тĕлне 630 пин тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă. Чăваш Ен çыннисем малтанхи пекех Египет, Турци, Таиланд, Греци, Европа çĕр-шывĕсенче канма кăмăлласçĕ. Иртнĕ çул Шупашкар юхан шыв портне туристсен 405 теплохочĕ чарăннă. Çак кăтарту 2013 çулхинчен самай пысăк. Пассажирсен шучĕ те малтанхинчен 17 пин çын ытларах. Пĕлтĕр республика çыннисене пурĕ 38 млн тенкĕлĕх тӳлевлĕ пулăшу кӳнĕ пулсан, çав шутра туризм отраслĕ енĕпе – 1500 млн тенкĕ /çиччĕмĕш вырăн/.

ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов вара туризма аталантарас тĕлĕшпе кăçал мĕн тума палăртни пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Республика правительстви туризм пĕлтерĕшне шута хуни шанăç çуратать. Культура министерствинче малашне çак ыйтупа 4 çын ĕçлĕ, çавна май ятарлă сектор туса хунă. Сектор кураторĕ – министр çумĕ Иван Иванов.

Иртнĕ çул федерацин тĕллевлĕ "Раççей Федерацийĕнче шалти тата тулашри туризма аталантарасси /2011-2018 çулсем/ программине "Этническая Чувашия" турист кластерĕн проектне кĕртнĕ. Ăна пурнăçа кĕртсен пирĕн республикăна туристсене явăçтарсси темиçе хут ӳсĕ. Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ – 7,5 млрд тенкĕ. Çав шутран 1,7 млрд тенкине федераци бюджетĕнчен уйăрма палăртнă, Чăваш Ен бюджетĕнчен – 300 млн тенкĕ, ыттине – уйрăм инвесторсем.

Вадим Петрович палăртнă тăрăх, çывăх вăхăтри тĕллевсенчен пĕри – çул хĕрринчи сервиса /автомобильсен федераци трассисене, çавăн пекех Атăл хĕрринчи хутлăхсене/ йĕркене кĕртес тĕлĕшпе инвестици проекчĕсем хатĕрлеме хавхалантарасси, ял, экологи, культура, сывлăха çирĕплетекен туризма аталантарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлесси.

■ **Надежда СМИРНОВА**

# Композитор ячĕпе – конкурс

ЧР Композиторсен ассоциацийĕ тата Пĕтĕм Раççейри хор обществин Чăваш Енри уйрăмĕ Культура çулталăкĕнче паттăрлăхпа патриотика темипе "Çĕр-шывăма савса юрлатăп" республика конкурсĕ ирттерме палăртнă. Ăна, сăмах май, Аристарх Орлов-Шуçăм çуралнăранпа 100 çул çитнине те халалланă.

Конкурс тĕллевĕ пархатарлă: ӳнер мелĕпе çĕршывăн çар мухтавĕпе паттăрла историне пропагандăласси, халăхра тата çитĕнекен ăрура моральпе этика, кăмăл-сипет пахалăхĕсене аталантарасси, паттăрлăхпа патриотика темипе çĕнĕ репертуар хатĕрлесси.

**Н.СМИРНОВА.**

### Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем 2014 çулхи пуш уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнмалли КУНСЕМ

**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/**

| | | |
|---|---|---|
| 03 | А.В.Самойлова | Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ |
| 17 | И.В.Исаев | Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ |
| 24 | С.И.Скворцов | Чăваш Республикин Патшалăх ветеринари службин ертӳçин – Чăваш Республикин патшалăх тĕп ветеринари инспекторĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ |
| 31 | В.В.Андреева | Чăваш Республикин информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ |

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем çынсене хăйсен компетенцине кĕрекен ыйтусемпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн халăха йышăнмалли пӳлĕмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Республика тӳремĕ, 2-мĕш çурт, 105-мĕш пӳлĕм.

Йышăну вăхăчĕ: 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 62-34-53, 39-36-43.

### Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче 2014 çулхи пуш уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнмалли КУНСЕМ

**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/**

| | | |
|---|---|---|
| 18 | Ю.А.Попов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ |
| 11 | А.П.Князев | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Бюджет, финанссем тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| 06 | О.В.Мешков | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| 20 | П.С.Краснов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| 04 | Н.В.Малов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |

Граждансене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Йышăну пӳлĕмĕнче 10 сехетрен пуçласа 17 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10-мĕш çурт, 3-мĕш пӳлĕм.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-67.

**•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•**

# Асра юлакан самантсем

Республикăра Культура çулталăкне тивĕçлĕ шайра ирттерме палăртаççĕ. Йăлана кĕнĕ фестивальсемпе конкурссемсĕр пуçне çĕннисем те, кăçал ятарласа йĕркелекеннисем, пулĕç. Сăмахран, "Хамăр тата пулас ăрусем валли вулатпăр" проект. Интернет сасăлав кăтартăвне тĕпе хурса чăвашсен паллă писателĕсен аудиокĕнекисен ярăмне кăларассипе çыхăннă вăл. Шупашкар хула администрацийĕн "Пултарулăх бульварĕ" арт-проекта та асăнса хăвармалла.

Конкурссене професире чи лайăххисене палăртассипе çыхăнтарнă. Акă "Ачасемпе ĕçлекен чи лайăх библиотекарь" конкурса илер-ха. Çак пулăмăн пĕлтерĕшĕ пысăк, вăл пултаруллă ĕçченсене чыслама çеç мар, ачасене кĕнекепе çывăхрах туслашма та пулăшĕ. Çамрăк талантсем валли "Черчен чечексем" республика фестивалĕ те йĕркелесшĕн.

Культура çулталăкĕ юбилейсемпе пуян. Тĕнче, Раççей шайĕпе илес тĕк Вильям Шекспирăн 450 çулне, Михаил Лермонтовăн 200 çулне асăнса хăвармалла. Тĕнчен пĕрремĕш вăрçи пуçланнăранпа шăпах пĕр ĕмĕр çитет.

Чăваш Ен те хăйĕн мухтавлă ывăлхĕрне манăçа хăвармĕ. Пурăннă пулсан кăçал Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ, СССР космонавт летчикĕ Андриян Николаев – 85, тĕнчипе палăрнă Геннадий Айхи поэт – 80, Анисим Асламас композитор 90 çул тултармаллаччĕ. Аристарх Орлов-Шуçăмпа Анатолий Тогаев композиторсен, Иван Ивник, Хветĕр Уяр, Аркадий Ĕçхĕл çыравçăсен 100 çулхи юбилейне паллă тăвăпăр. Сăмах май, Культура çулталăкĕнче 72 поэтпа писателĕн юбилейĕ иртĕ.

# Культура керменĕсем çĕнелĕç



Тĕп хулари культура объекчĕсенчен паллăраххисем – П.П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕ /"Çĕнтерӳ" асăну комплексне кĕрет/ тата "Салют" культура керменĕ – кăçал сăн-сăпатне тĕпрен улăштарĕç.

Реконструкци проекчĕсене "СНЕГ-СЕРВИС" ООО хатĕрленĕ. Вĕсемпе килĕшӳллĕн П.П.Хусанкай ячĕллĕ кермен çумне виçĕ хутлă çурт тĕксе лартĕç. Унта хореографи залĕсем, усă курмалли пӳлĕмсем вырнаçĕç. Хальхи курав залне те çĕнетĕç, ăна 1000 çын вырнаçмалла тăвĕç.

"Салют" культура керменĕнчи курав залĕ те тĕп юсав хыççăн çавăн чухлĕ çынна йышăнма пултарĕ. Маларах палăртнă тăрăх – реконструкци вăхăтĕнче пĕтĕмĕшле лаптăк тата 3800 тăваткал метр чухлĕ пысăкланĕ.

# Шупашкарта – Польша фильмĕсем



Регион аталанăвĕн "Содружество" фончĕн пуçарăвĕпе çак вăхăтра Наци библиотекинче Польша режиссерĕн, сценарисчĕн, общество ĕçченĕн Кшиштоф Занусси фильмĕсен вунă кунлăхĕ пырать.

Чăваш Ен куравçисем режиссерăн çичĕ ĕçĕпе, хăй вăхăтĕнче тĕнче кинофестивалĕсенче сумлă парнесене тивĕçнисемпе, паллашĕç. Вĕсем: "Структура кристалла" /1969/, "Семейная жизнь" /1970/, "Иллюминация" /1973/, "Защитные цвета" /1977/, "Константа" /1980/, "Год спокойного солнца" /1984/, "Прикосновение руки"/1992/.

"Структура кристалла" ĕçе пуçласа Мускав кинофестивалĕнче 1969 çулта кăтартнă.

# Курав йыхравлать




Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче Раççей Художниксен союзĕн членĕн Любовь Костенко ӳнерçĕн "Любовь Костенко тĕнчи. Лондон. Париж. Амстердам" куравĕ ĕçлет.

Вăл Ленинградра çуралнă, унти И.Е.Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура тата архитектура институчĕн живопиç факультетне пĕтернĕ. Хальхи вăхăтра Санкт-Петербургра тата Амстердамра пурăнать. Костенко ĕçĕсене Европăри чылай музейпа галерейăра кăтартнă. Сăмахран, юлашки вăхăтра Венăра, Дрезденра, Рио-де-Жанейрора, Гамбургра тата ытти хулара курав ирттернĕ. Ӳнерçĕн пултарулăхне Нидерланд тата Аслă Британи çĕр-шывĕсенче лайăх пĕлеççĕ, вĕсенче вăл 30 ытла ятарлă курав йĕркеленĕ.

Халĕ Любовь Алексеевнăн живописĕпе графики Чăваш Ен куравçисене киленĕç кӳрет.

# Балет ăстисен çитĕнĕвĕ

Культура çулталăкĕ пуçланиччченех Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн балет труппи хамăрăн культурăна чикĕ леш енче пропагандăлама пуçланă. Труппăн пултарулăх ертӳçи Данил Салимбаев ертсе пынă ушкăн Германи, Швейцари, Итали, Польша, Австри çĕршывĕсенче гастрольте пулнă. Чăваш ташă ăстисем П.Чайковскин "Лебединое озеро", "Щелкунчик", "Спящая красавица", Л.Минкусăн "Дон Кихот" балечĕсене кăтартнă.

Салимбаев шухăшĕпе – артистсем ума лартнă тĕллевсене ăнăçлă пурнăçланă. Андрей Субботин, Марина Чемалина, Анна Серегина солистсем, çавăн пекех çамрăк артистсем – Ольга Сапаркина, Дмитрий Поляков, ыттисем те – уйрăмах палăрнă.

Театрăн паянхи афиши балет спектаклĕсен вун-вун тĕсĕпе çиçсе тăрать. Нарăс уйăхĕнчех куравçăсене "Кармен-сюита", "Щелкунчик", "Сарпике","Дон Кихот" тата ытти спектакльпе савăнтарĕ.



**Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•




*Ĕçле – тутă пулăн, кĕлĕ ту – çăлăнăн, тӳс – каçарĕç.*

*Чунри*

# Са́пкаx çакар мар-ха...

***Хулио Торри философăн çакăн пек каларăш пур: «Хĕрарăма пӳрнĕ çут çанталăк вăйĕ аça-çиçĕмпе, çилпе, электричествăпа тан». Йывăрлăхсем хĕрарăма тата вăйлăрах тăваççĕ, çирĕплетеççĕ. Хĕрарăма эпир çут çанталăкăн черчен çуррийĕ тетпĕр пулин те, чăнах та, унăн вăй-хăватĕнчен, тӳсĕмлĕхĕнчен, чăтăмлăхĕнчен тĕлĕнме пăрахаймастăп. Кирлĕ чухне вăл тулли миххе кăна мар, арçынна хăйне те нимĕн те мар йăтса çĕклеет... Çавăн пек вĕсем – пирĕн чăваш хĕрарăмĕсем. Анчах паян сăмахăм вĕсем пирки мар-ха. Чăваш арĕн кăмăлĕ, характерĕ, тыткаларăшĕ çинчен сăмах пуçарасшăн.***

Мĕн авалтан чăваш çемйисенче ача-пăчана: «Арçын – çемье пуçĕ, кил хуçи /çав вăхăтрах хĕрарăм хуçи те/ тесе вĕрентнĕ. Ахальтен-им халăхра: «Качча кайиччен хĕр – ашшĕн, çемьеленсен мăшăрĕн ирĕкĕнче»,– тесе калаççĕ. Ăна хисеплесе, чуп туса, упраса кăна тăмалла иккен. Этемлĕхĕн вăйлă çуррине ытлашшипех мухтаканĕсем, чыслаканĕсем вара: «Хĕрарăм турри – арçын»,– теççĕ. Чимĕр-ха, капла эпир арçынсене ытлашшипех, виçесĕр ачашласа яман-и? Çакă паян кăна пуçланнă пулăм мар, унăн тымарĕ чылай тарăн. Ара пепке çут тĕнчене килсенех ăна уйăрса пăхма тытăнатпăр. Хĕр ачана «кĕмĕлпе» кăна танлаштаратпăр, арçын ачана вара «ылтăн» тетпĕр. Ылтăн çутăрах та хаклăрах пулнă пек ывăлĕ те амăшĕшĕн çывăхрах. Упăшкине чунтан юратакан кирек епле хĕрарăм та мăшăрне тата та хăпартлантарас, хĕпĕртеттерес тесе арçын ача çуратма ĕмĕтленет. Эх, ачасене çапла уйăриччен пепке çут тĕнчене сывă килнĕшĕн, таса пулнишĕн ытларах хĕпĕртесчĕ. Пӳлĕхçе тав тăвасчĕ. Пурнăçăмра темĕн те курма, илтме тӳр килчĕ. Хăш-пĕр арçын арăмĕ хĕр ача çуратсан: «Каллех пĕç тăрăх юхтараканнине илсе килтĕн»,– тесе кăмăлсăрланнине асăрханă. Çав вăхăтрах ывăлĕсем мар, хĕрĕсемех çитĕнсен ашшĕсене пăхаççĕ. Чылай чухне хунямăшĕпе хуняшшĕне те кинĕ пулăшать, хавхалантарать, йывăрлăхĕсене татса пама витĕм кӳрет. Ывăлĕ амăшне мунчара çумастех. Кинех вĕткеленет, хыпкаланать. Анчах вăхăтĕнче ăна ывăлĕпе танах хисеплемелле, юратмалла пулнине питĕ кая юлса кăна ăнланса илетпĕр çав.

«Ачамсене /арçын ачапа хĕр ача/ ӳстернĕ чухне ытларах ывăл кăмăлне тивĕçтерме тăрăшаттăм. Çитĕнсен те Олега нумайрах пулăшаттăм. Хĕрĕме темшĕн уйăрса хăварнă çав. Ывăл авланчĕ те манран сивĕнчĕ. Йăлт арăмĕн ирĕкне кĕрсе ӳкрĕ. Маларах



хăйĕн вăрттăнлăхĕсене те каласа параканскер халĕ пач каласми пулчĕ. Çуралнă кунпа мана парне панăшăн та кинĕм сăмахланă. Халĕ хĕрĕм кусĕнченех пăхатăп. Вăлах сиплет, пăхать. Эх хĕрĕме малтанах пулăшмалла пулнă та. Ытла та кая юлса ăнланса илтĕм çав ăна»,– çапла ӳкĕнсе каласа пачĕ мана пĕлĕшĕм. Хăш-пĕр хĕрарăм ывăлĕ авлансан кинне ытларах юратнăшăн та кĕвĕçет. Кĕрӳпе кине те çемьесенче раснарах йышăнатпăр-çке. Хĕр яланах кинрен лайăхрах. Кĕрӳ вара ывăл пекех калама çук хаклă, хисеплĕ çын. Кĕрĕвĕ килсен хĕрĕн амăшĕсем чупса кăна çӳреççĕ, темĕн кăларса хума та хатĕр.

Пĕлĕшĕмсем висĕ ывăл çитĕнтернĕ. Тĕпренчĕкĕсене ытла та юратнăран килтĕрĕшри, пахчари ĕçĕсене йăлт хăйсем тунă. Апат çимелерсан чăх, хур тукмаккисене вĕсене тыттарнă. Анчах ку ырă кӳни мар. Ĕç тĕлне пĕлмен арçынпа арăмĕсене те пурăнма йывăр. Апла тăк – эпир хамăрах, хĕрарăмсемех, арçынна пăсатпăр. Мĕн пĕчĕкрен арçын ачана ытларах ĕçлеттермелле, çирĕп пулма хăнăхтармалла, кирлĕ чухне ятламалла та. Ятланăшăн вăл ашшĕ-амăшне юратма пăрахмасть. Çитĕнсен тĕрĕс воспитани панăшăн тав тăватех! Арçын хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама пултартăр. Хĕрарăм вара ăна ăнланса хавхалантарса пытăр. Хаклă хĕрарăмсем, чиперуксем, ырăскерсем, айтăр-ха арçынна «сăпка çакма» пăрахар! Йĕри-тавра пăхан та – йĕркеллĕ, çирĕп, тĕреклĕ те кĕрнеклĕ арçын юлмарĕ те вĕт. Çемçешкескерсем ним тăвайман енне эрех ĕçеççĕ. Йывăрлăхран хăтăлмалли çул-йĕр пĕр çавă çеç вĕсен. Арçын ачана та хĕр ачаран уйăрса ытларах савма пăрахар. Ывăлсене ыранхи пурнăç валли тĕрĕс хатĕрлер. «Ачаш хĕртен – ясар пулать, ачаш ывăлтан вăрă пулать»,– тесе ахальтен сăмах кăларман ĕнтĕ.

Пĕтĕмлетерех калас тăк – арçынпа та йывăр, арçынсăр та çăмăл мар. Апла та капла та тӳсмелле. Çакнашкал хĕрарăм шăпи.

**Анна ВАСИЛЬЕВА.**
Вăрнар районĕ

*Ăраскал*

# Çампа́к чухне аванччĕ...

***Сывă-и, редакци? Манăн чун ыратăвне вулаканăмпа пайлас килет. Уççăн калаçма хĕр тус та çук. Качча тухнăранпа упăшкапа, çемьепе çывăхрах пулас тесе вĕсемпе çыхăнăва татнă. Аттепе анне те çĕре кĕнĕ ĕнтĕ. Хунямапа та сăмах пуçарни кăлăхах. Килĕштермест вăл мана. Унщăн ывăлĕнчен хакли никам та çук...***

Вадимпа эпир пĕр ялта çитĕннĕрен ачаранах туслă пулнă. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăнах пĕрлешрĕмĕр. Малтанах ялта пурăнтăмăр. Анчах çамрăк хуняма килте хăй хуçа пулнине кăтартма тăрăшни, мăкăртатни йăлăхтарса çитерчĕ. Вара ачасем çураличчен хулана кайса вырнаçас терĕмĕр. Упăшка завода ĕçе кĕчĕ, ăна общежитире пӳлĕм пачĕç. Эпĕ ача садне няньăна кайрăм. Каярах пĕрин хыççăн тепри хĕрпе ывăл çут тĕнчене килчĕç. Укçа-тенкĕ çитсе пымасть пулин те килĕштерсе пурăнма тăрăшаттăмăр.

Ачасем кăшт çитĕнсен ипотека кредичĕпе икĕ пӳлĕмлĕ хваттер туянтăмăр. Хамăрăн кĕтес пурри аван ĕнтĕ, анчах пурнăç йывăрланса çитрĕ. Аптăранă енне Вадим пĕлĕшĕсемпе пĕрле Мускава ĕçлеме тухса кайрĕ. Икĕ уйăхра пĕрре кăна килсе тăратчĕ. Унсăр питĕ тунсăхлаттăм, пĕччен икĕ тĕпренчĕке воспитани пама та çăмăлах марччĕ. Хваттершĕн ĕçлесех çулсем иртнине те сисмерĕмĕр. Ачасем шкул пĕтерчĕç. Нухрат пур-пĕр çитсе пымасть. Мăшăрăм юлашки çулсенче вĕчĕрхенме, тарăхма пуçларĕ. Эрех ĕçме тытăнчĕ, пирус туртма пуçларĕ. Каярах тата мухмăр пуличченех сыпатчĕ. «Кашни кунах ан ĕç-ха»,– тениуншăн пушă сăмах кăна. «Мухмăра ăна пушă вĕçĕ пек вĕçлемелле»,– тупăнатех унăн хуравĕ. Ĕçекен çынна ĕçрен те хăвалама тапратрĕç. «Кĕмĕлне» пач та ĕçлесе илми пулчĕ. Специалистсенчен пулăшу ыйтма тиврĕ вĕт. Ун хыççăн темиçе çул хăватли пирки пачах манчĕ. Каллех пирĕн пурнăç йĕркеленчĕ. Вăл тата эпĕ ĕçлесе илнĕ укçана йăлтах ачасене вĕрентме, тумлантарма, кредит тӳлеме яратпăр. Упăшкан шалăвне пĕтĕмпех хамра тытатăп. Хăй вăхăтĕнче хамăр ют хуласене çӳременрен хĕрĕме канма та яркаларăмăр. Анчах çакнашкал ырăлăх нумая пымарĕ. Йывăрлăха чăтаймарĕ упăшка – каллех «симĕс çĕленпе» туслашрĕ.

Халĕ Мускава кайкаласа килет те мухмăр пуличченех кӳпет. Укçине те мана памасть. Хирĕç калание кăмăлламасть, алă çĕклесшĕн. Ĕçкĕçпе пурăнасси сĕре кансĕр. Хăв та чирлĕ çынна çаврăнатăн. Чĕре ыратма пуçларĕ. Çӳçĕм те кăвакарма тытăнчĕ. Ачасем те ашшĕнчен сивĕнчĕç. Ытла та хавшак çав арçынсем. Йывăрлăха тӳсеймеççĕ, эрех черккинче кăна çăлăнăç шыраççĕ. Мĕнле сыватмалла-ши мăшăрăма? Вулаканăм, тен, эсĕ сĕнӳ-канаш паратăн?

**Надежда ИВАНОВА.**
Канаш районĕ

*Интереслĕ!*

# Пыса́к ва́ртта́нла́х пирки калаçар-ха...

***«Çак кунсенче пурнăçăмра çине-çинех йывăрлăх пулчĕ. Алă патне ĕç пымастчĕ, юлташăмсемпе пĕлĕшĕмсем те сивĕнме тытăнчĕç. Шăпах çав тапхăрта мана «Секрет» /Вăрттăнлăх/ документла фильм пăхма сĕнчĕç. Çавăн хыççăн тин манăн шăпам улшăнма пуçларĕ»,– çапла каласа парать куракана асăннă кинофильмри тĕп сăнар.***

Эпĕ те висĕ хутчен те пăхрăм «Секрета». Ун хыççăн шăпама, пурнăçăма темиçе хутчен те тишкерсе, сăнаса тухрăм. Ĕçĕм-пулăмпа, тыткаларăшпа кăна мар, шухăшлас енĕпе те йăнăшнă иккен халĕччен. Шел те, тĕрĕс воспитани паманниех пире çак утăм патне илсе çитернĕ. Çапах та мĕн çинчен-ха асăннă фильм? Кĕскен калас тăк – пурнăçăн сĕре пысăк вăрттăнлăхĕ пирки. Ăна пĕлсен эпир хамăр ĕмĕтленнине йăлт /çитĕнӳ, çирĕп сывлăх, карьера, нухрат, чаплă кермен.../ илме пултаратпăр. Пире, çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакансене пурне те пĕр хăват /вăй/ – çĕр туртăмĕн саккунĕ – пĕрлештерет. Шăпах çав туртăм вăрттăнлăх шутланать те. Пурнăçра мĕн пулса иртессине эпир хамăрах шухăш-кăмăл, сăнар урлă ыйтса /туртса/ илетпĕр. Кун пирки ăслайсем яланах пĕлнĕ. Авалхи Вавилонта пурăнакансем те аван чухланă ăна. Çапла, эпир мĕн пирки ытларах шухăшлатпăр – çавă пулать! Çак саккун кашни çын валлиех яланах ĕçлет.

Чылай çын мĕн пуласран хăрать – çавăн пирки ытларах «пуç ватать». Вĕсен çумне вара яланах хуйхă-суйхă çулăхать. Кам яланах чир-чĕр пирки сăмахлать – çавă чирлет. Эпир хамăр пурнăçа хамăрах тăватпăр. Çут çанталăк этеме сĕре пысăк парне – туйăмлăх-сисĕмлĕх – парнеленĕ. Лайăххине те, начаррине те туятпăр эпир. Çут тĕнче сирĕн чун кĕввине илтетех, хурав паратех. Чун пусăрăнчăк чухне те япăххи çинчен мар, лайăххи пиркиех шухăшламалла. Калăпăр, ачасемпе е килте усракан чĕр чунсемпе йăпанмалла. Çут тĕнчерен мĕн кирлине ыйтиччен халĕччен панă ырлăхшăн, сывлăхшăн тав тумалла. Кун пек чухне сăмахпа усă курмасан та юрать. Шухăша, сăнара та хурав парать вăл. Ĕмĕтленнине, ыйтнине тăтăш куç умне кăларма тăрăшмалла. Лайăххи пирки шухăшланă чухне эсир хĕпĕртетĕр, ырă хăват сапалатăр. Çапла пахинех «илĕртсе» илетĕр.

Пире вара мĕн ачаран: «Усалли пирки шухăшламасан лайăххи пулмасть», – тесе вĕрентнĕ. Е тата халăхра: «Питĕ вăйлă кулянмалла, вара лайăххи пулатех», – шухăшлав анлă сарălнă. Тĕрĕс мар шухăшласа, иккĕленсе начар пуласси патне хамăрах утăм ярса пусатпăр. Тĕн-тĕшмĕш те пуçăмăра минретет. Сăмахран, хура кушак çула каççан ăнмассине ĕненетпĕр. Куна сулахай ураран пуçласан е çĕнĕ уйăха сулахай хул пуççи урлă курсан ĕç-пуç ăнмассине те çирĕпленнĕ йĕрке пек йышăнатпăр. Урама тухсанах малтан хĕрарăма курни те ура хурать имĕш пире... Кун пек тĕслĕх темиçе те илсе кăтартма пулать. Пĕрре те ĕненмелле мар вĕсене. Ырри пирки ытларах шухăшламалла, ырă ĕç тумалла. Ырă ырăпах таврăнать.

**Нина ИВАНОВА.**
Красноармейски районĕ



*Пурнăçран*

# Ша́па килет тĕ́рлĕ́рен

***Такам кăшкăрса макăрнипе вăранчĕ Марина. Юнашарти кравать çине хуп-хура, вĕтĕ кăтра çӳçлĕ хĕре вырттарнă иккен. Шуранкаскер, шĕвĕр сăмсаллăскер йĕнĕ май тем мăкăртатать.***

Марина нимĕн чĕнмесĕр ăна сăнарĕ. Хăйне аса илчĕ. Вăл та ĕнер кунĕпех макăрса выртрĕ. 3 кун каялла каçхине ăшĕ ыратнăран ăна «васкавлă пулăшу» машинипе больницăна илсе килчĕç. Çамрăк хĕрарăм тухтăрсене хăй ача кĕтнине пĕлтерчĕ. Шур халатлисем тӳрех анализ илчĕç, пепке хырăмра хăйне еплерех туйнине тĕрĕслеме пуçларĕç.

«Ача чĕри тапмасть», – тенине илтсен Марина тăнне çухатрĕ. Палатăра çеç куçне уçрĕ вăл. Мĕн пулса иртни ăна тĕлĕкри пек туйăнчĕ. Тухтăр сăмахĕсем çине-çинех аса килчĕç. Нивушлĕ вĕсем тĕрĕс? Шултра куççуль пит çăмарти тăрăх юхса анчĕ. Маринăн чĕри хытăрах ыратма пуçларĕ, сывлăшĕ пӳлĕнчĕ. «Мĕнле çапла пулчĕ-ха? Мĕншĕн асăрханмарăм-ши?» – шухăшсем канăç памарĕç ăна.

«Синицина, хăвăра еплерех туятăр?» – ыйтрĕ палатăна кĕнĕ шурă халатлă хĕр. Вăл пурнăç малалла тăсăлнине, çамрăк мăшăрăн татах ачасем пулассине, тепрехинче асăрханулăх пирки манмалла маррине пĕлтерчĕ. Тухтăр тухса кайсан Марина пуçне утиялпа витсе тата хытăрах макăрма пуçларĕ. Ыйхă килмерĕ çав каç. Инкек çинчен мăшăрне мĕнле пĕлтерĕ вăл? Коля хăй çемьере пĕччен ача пулнăран яланах шăпăрлансем çинчен ĕмĕтленетчĕ. Марина ача кĕтнине пĕлсен чунтан савăннăччĕ, арăмне ылтăн çĕрĕ те парнеленĕччĕ. Пепке хăш вăхăтра çуралса мĕнле уйăхсенче утма, калаçма пултарасса та шухăшласа хунăччĕ. Виççĕшĕ пĕрле уçăлса çӳреме, канма каймашкăн ĕмĕтленетчĕ. Текех ача çуккине пĕлсен мĕн пулĕ унпа? Упăшки эрне каялла Чул хулана тухса кайрĕ. «Ача çуралсан çемье расхучĕ тата ӳсет, юлташсемпе пĕр икĕ хутчен ĕçлеме кайса килес», – терĕ вăл мăшăрне. Марина хирĕçлемерĕ. Пĕрер уйăх Кольăсăр пурăнасси хăратмарĕ ăна. Хырăмĕ хальлĕхе паллă та мар. Кашни кунах телефонпа çыхăнса тăчĕ мăшăр. Коля арăмĕ хăйне еплерех туйнипе кăсăкланчĕ, асăрхануллă пулмаллине аса илтерсех тăчĕ. Анчах Марина сыхланаймарĕ. Коля кĕçех киле таврăнасса пĕлсен хваттерне тасатма шухăшларĕ. Чӳрече каррисене илсе çурĕ. Çакнă чухне вара ури айĕнчи пуканĕ шуса кайрĕ. Хĕрарăм ăнăçлă сиксе анчĕ пулин те çав каç вăл хăйне япăх туйрĕ. Пилĕкĕ ыратрĕ. Тепĕр кун вăл вырăн çинчен те тăраймарĕ, хырăмĕ те касса ыратма пуçларĕ. Çапах мăшăрĕ шăнкăравласан хăйне япăх туйнине пĕлтермерĕ. Кăнтăрла «васкавлă пулăшу» машинине чĕнчĕ.

Мăшăрĕ çинчен шухăшланă вăхăтра Маринăна упăшкинчен смс килчĕ: «Юратăвăм, эпĕ тепĕр 2 сехетрен хулара пулатăп. Кĕт мана». Каярахпа Коля шăнкăравларĕ, мăшăрĕн сывлăхĕпе кăсăкланчĕ. Арăмĕ патне тӳрех больницăна килчĕ...

Паян Марина хăйне лăпкăрах туять. 7 уйăхран ача амăшĕ пулаймассипе çырлахрĕ вăл. Чылай çемьере çакнашкал инкек тухать иккен. Палатăра вĕсем виççĕн. Шухăшсен авăрĕпе Марина енчен енне çаврăнкаларĕ. Çумри кравать çинче выртакан хĕр те вăраннă. Паллашрĕç вĕсем, пĕр-пĕрне хăйсен инкекĕсем çинчен каласа пачĕç. Люда 19-та кăна. Университетра вĕренет. Ялта çуралса ӳснĕ. Хула каччипе туслашнă. Çамрăксем пĕр-пĕрин ашшĕ-амăшĕпе те паллашма шухăшланă, анчах Люда ача кĕтнине пĕлсен каччă йĕп пек çухалнă. Унăн ашшĕпе амăшĕ те пикене вĕсен çуртне килсе çӳреме чарнă, ачи те вĕсен ывăлĕнчен мар теме хăйнă. Пысăк хырăмлăскер вĕсенчен пулăшу кĕтсе илме çуккине ăнланса хырăм пăрахма палăртать. Халĕ акă Люда больницăра выртать. Хăй ача кĕтнине пĕлсен вăл савăннăччĕ. Саша ят хума ĕмĕтленнĕччĕ. Хĕр е ывăл пулсан та... Анчах ĕмĕчĕ татăлчĕ.

«Çакнашкал пулса тухнăшăн текех никама та ан айăпла. Малашне асăрханullăрах пул. Пĕр-пĕр ĕçе тытăниччен 7 хут шухăшла. Хăвна упра. Халĕ вара лăпланма тăрăш», – терĕ Марина çĕнĕ пĕлĕшне вĕрентсе сыв пуллашнă май.

Мăшăра тухтăрсем сахалтан та çур çул сыхланма сĕнчĕç. Марина кашни куна шутласа пычĕ. Питĕ вăраххăн иртнĕн туйăнчĕç ăна вĕсем. Коля та пулни-иртнишĕн кулянчĕ, анчах çакна мăшăрне кăтартмарĕ. Кун хыççăн кун иртрĕ. Çĕр çине пĕрремĕш юр пĕрчисем ӳкнĕ кун Марина хăй каллех ача кĕтнине пĕлчĕ.

«Асăрханullăрах. Хăв тăраятăн-и? Ак çакăнта вырт», – çак сăмахсемпе вăранчĕ Марина. Куçне уççанах вăл хăй çап-çутă пӳлĕмре выртнине асăрхарĕ. 2 сехет каялла вăл пепкине пурнăç парнелерĕ. Йывăррăн çуратнăран хăйне япăхрах туять. Кăтăш пулнă вăхăтра вăл Людăна аса илчĕ. Больницăран тухсан вĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулман. Унтанпа 2 çул иртрĕ ĕнтĕ. Ăçта халь çав пике? Еплерех пурăнать? Марина акă каллех больницăра. Анчах вăл кунтан хурланса мар, савăнса, ачипе пĕрле тухать.

Пепкесене кăкăр çитермелли вăхăт çитнĕ иккен. Маринăна та пĕчĕкскерне пачĕç. Мĕн тери маттур вăл! Валюшăна алла илсен Маринăн куçĕ шывланчĕ. Мăш-мăш сывлакан пĕчĕк чун çине хĕрарăм ытарайми пăхса ларчĕ. Кĕçех Валя амăшĕн кăкăрне хаваспах чаплаттарма пуçларĕ, унтан çывăрса кайрĕ.

Палатăра пăчă. Хĕрарăм кăшт уçăлма коридора тухрĕ. Медсестрасем тин çеç çуратнисене каталкăсене кăлтăртаттарса палатăсене леçеççĕ. Акă Марина умĕнче пĕрне илсе кайрĕç. Хуп-хура, вĕтĕ кăтра çӳç курăнса юлчĕ. Люда... Люда пулмарĕ-и вара вăл? Марина каталкăна илсе кĕнĕ палатăналла утрĕ. Куçĕпе пĕлĕшне шырарĕ. Акă вăл... «Люда, Еремеева, эсĕ-и ку?» – пăлханса ыйтрĕ хĕрарăм. Хăйне такам палласа илнипе тĕлĕннĕрен кравать çинче выртаканскер тимлĕн пăхрĕ. «Марина, Синицина», – терĕ вăл вăйсăртарах сасăпа. «Каллех тĕл пултăмăр. Эсĕ ача çуратрăн-и? Саламлатăп. Эпĕ те анне пултăм», – Людăна сăмах памасăр пăшăлтатрĕ Марина.

Каç кӳлĕм Маринăпа Люда ачисем çывăрнă вăхăтра коридорта тĕл пулчĕç. Чи çывăх юлташсем пек калаçрĕç вĕсем. Люда больницăран тухсан урăх каччăпа паллашнă. Çур çултан туй кĕрлеттернĕ. Алла диплом илсен пĕр усламçă патне ĕçе вырнаçнă. Бухгалтер вăл. «Хырăм пăрахнă хыççăн текех ача пулмасть пуль тесе иккĕленнĕччĕ. Çие юлнине пĕлсен калама çук савăнтăм», – терĕ вăл кантăкран инçете пăхса. Унтан шăп пулчĕ. 1-2 минутран Люда каллех сăмах пуçларĕ: «Больницăран тухсан пĕр 3 уйăхран малтанхи савнине – Костьăна – куртăм. Ман пата общежитие килчĕ. Ача пирки кăсăкланчĕ. Хырăм пăрахнине пĕлсен эпĕ çакнашкал киревсĕр ĕç тума пултарасса шухăшламаннине пĕлтерчĕ. Тĕрĕс мар утăмĕшĕн хăйне ӳпкелерĕ. Амăш сăмахĕнчен иртейменни пĕтернĕ иккен. Чи çывăх çынни ăна ял хĕрĕпе туслашма, унпа çемье çавăрма чарнă. Каççерен усал тĕлĕксем курнăран, ача сассисем илтĕннĕрен арçын чиркĕве кайса пачăшкăпа канашланă. Унта тин вăл хăй пысăк йăнăш тунине, пĕр самантрах юратнă çыннинчен те, пулас ачинчен те хăтăлнине ăнланнă». Çамрăк хĕрарăм пулни-иртнишĕн никама та айăпламасть. Телее, шăпа ăна Викторпа тĕл пултарнă. Вĕсен халĕ ывăл пур.

Больницăран тухсан та Маринăпа Люда часчасах тĕл пулма тăрăшрĕç. Ачисемпе пĕрле уçăлса çӳрерĕç, тĕпренчĕкĕсен çитĕнĕвĕсемпе паллашрĕç. Уявсене те пĕрле паллă турĕç. Людăпа Виктор ывăлĕн хресна амăшĕ пулма Маринăнах суйларĕç. Вăл Людăшăн амăшĕнчен те çывăхрах пулса тăчĕ. Шăпах Марина ăна 2 çул каялла хăйĕн чунĕ çунса тухать пулсан та лăплантарма тăрăшрĕ. Ырă канашсем пачĕ...

**Ольга АРТЕМЬЕВА-БАРИНОВА.**
Елчĕк районĕ



*Психолог сĕнĕвĕ*

# Пуçла́ха пула́шмаллах

**Сывă-и? Манăн ыйтăвăм, паллах, хăйне евĕр, тĕрĕссипе, ун пирки сăмах пуçарма та аванах мар. Пирĕн пуçлăхран яланах аван мар шăршă кĕрет. Унпа пĕр пӳлĕмре пуласси сĕре тертлĕ. Ют çынсем килсен пӳлĕмрен тухма тăрăшатпăр. Ара вĕсем пирĕнтен начар шăршă кĕрет тесе шухăшлама пултараççĕ-çке. Тата хăйĕн статусне кура мар начар тумланать вăл. Хĕлле те çулла та пĕр джинс шалаварпах, пĕр свитерпах çӳрет. Мĕн тумалла-ха пирĕн? Йĕркеллĕ çынсем кашни кун çăвăннине, дезодорантпа, туалет шывĕпе усă курнине еплерех систермелле-ши? Аслă ĕçтешĕмĕре кун пирки калама та аванах мар.**

**М.ИВАНОВА.**

Паллах, ăна арçын косметикин пуххине парнелеме пулать. Унăн йышĕнче душра çăвăнмалли гель те, дезодорант-антиперспирант та пур. Е тата сирĕн патăрта халĕччен пĕрре те пулман пĕлĕшпе каласса килĕшме пултаратăр. Вăл сирĕн патăра пырсанах: «Спортсменсем хывăнса тăхăнакан пӳлĕмри пекех шăрăшă сарăлнă-çке кунта. Епле ларатăр эсир? Хушăран хăть пӳлĕме уçăлтарма чӳречĕрсене уçăр!»– тесе калатăр.

Тепĕр меслет те пур: ун валли ята палăртмасăр çыру çырмалла та электрон почтăпа ямалла. Ăна тухтăр патне кайса тĕрĕсленме сĕнни те пăсăклă пулмĕччĕ. Хăш-пĕр чирпе чирлекенсем вăйлă тарлаççĕ. Çак меслетсем пулăшмаллах. Эсир çак сĕнӳсене усă курсан та сирĕн пуçлăхăр таса, тирпейлĕ çӳреме пуçламарĕ тĕк – нимĕн те тăваймăн хăнăхма, çырлахма тивет.

**Ыйтăва Елена АЛЕКСЕЕВА психолог хуравланă.**

**Страницăна Роза ВЛАСОВА хатĕрленĕ.**

